23-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
СЕНТЯБРЬ
19
ШАМАТКУН
219 (6154) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ÇАР ӖÇНЕ ВӖРЕНЕССИ—СОВЕТ ГРАЖДАНӖСЕН ТИВӖÇӖ

Оборонӑн Государственный Комитечӗ ССР Союзӗн гражданӗсене пурне те çар ӗçне вӗрентесси çинчен постановлени йышӑннӑранпа пӗр çулталӑк тулчӗ. Çак вӑхӑт хушшинче всевобучӑн пӗррремӗшпе иккӗмӗш черечӗсенче темиçе пин совет гражданӗсем 110 сехетлӗ программа тӑрӑх çар ӗçне вӗренчӗç. Пирӗн Чӑваш республикинчи всевобуч пункчӗсенче çар ӗçӗн малтанхи пӗлӗвӗсене туяннӑ çынсем те вуншар пинӗн шутланаççӗ. Вӗсенчен нумайӗшӗ халӗ тӑшмана хирӗç фронтра паттӑррӑн çапӑçаççӗ.

Всевобуч пункчӗсенче вӗреннӗ хыççӑн Действующи армине кайса, вӑрçӑра хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн наградӑсем—орденсемпе медальсем илме тивӗçлӗ пулнисем те пур. Вӗсем хӑйсене çар ӗçне лайӑх вӗрентнӗшӗн, политикӑлла воспитани панӑшӑн всевобуч пункчӗсен командирӗсемпе политработникӗсене тав тӑваççӗ. Шупашкарти всевобуч пунктӗнче çар ӗçне вӗреннӗ вӑхӑтра хӑйӗн ирӗкӗпе Хӗрлӗ Çар ретне тӑнӑ Нагасов юлташ, унччен хулари предприятисечен пӗринче ӗçленӗскер, хулари çарӗç комиссариатне янӑ çырура хӑйӗн Хӗрлӗ Çарти пурнӑçӗ çинчен пӗлтерет. Вӑл Хӗрлӗ Çарта хӑйӗн пӗлӗвӗсене ӳстерсе пынӑ, старши сержант званине илнӗ. Нимӗç захватчикӗсене хирӗç çапӑçнӑ çӗрте хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн ӑна правительство наградине пама тӑратнӑ. Всевобучӑн малтанхи черетӗнче çар ӗçне вӗреннисенчен халӗ Хӗрлӗ Çар ретӗнче вӑтам командирсемпе политработниксем пулса тӑракансем те сахал мар.

Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказне пурнӑçа кӗртсе пынӑ май, всевобуч пункчӗсенче иккӗмӗш черетре вӗренекенсем çар ӗçне тӗплӗн вӗренме тӑрӑшрӗç. Вӗсем стройпа çӳреме, винтовкӑран тӗл пеме, çапӑçура гранатӑпа тата çунакан шӗвек тултарнӑ бутылкӑсемпе усӑ курма лайӑххрах вӗренчӗç. Çавна эпир вӗренӳ результачӗсенчен те куратпӑр. Стройпа çӳреме хатӗрленес енӗпе республикӑри всевобуч пункчӗсенчи мӗнпур боецсенчен 22,3 проценчӗ «отлично», 48,2 проценчӗ «хорошо» паллӑсем илнӗ. Пӑшалтан тӗл пересспе «отлично» паллӑ илнисем 20 процент, «хорошо» паллӑ илнисем 42,3 процент, тактика енӗпе «отлично» паллӑ илнисем 18 процент, «хорошо» паллӑ илнисем 43 процент пулчӗç. Çавнашкалах штык вӗççӗн çапӑçассипе те, химиллӗ тапӑнуран сыхланассипе те всевобуч боецӗсем нумайӗшӗ лайӑх вӗренчӗç. Çар ӗçне вӗренессипе уйрӑмах Шупашкар хулинче, Шӑхасан, Комсомольски тата Пӑрачкав районӗсенче ӑнӑçлӑн туса пынӑ. Облаçри çар комиссариачӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне Шупашкарти пункт илнӗ.

Иккӗмӗш черетри результатсенчен куçӗре пысӑк çитменлӗхсем пурри те палӑрчӗ. Всевобучӑн уйрӑм пункчӗсенче вӗренӳ ӗçне кирлӗ пек организацилемен, занятисене тӗплӗн хатӗрленсе ирттермен, вӗренекенсен йӑнӑшӗсене çийӗнчех тӳрлетсе пыман, малтанхи кунсенченех вӗренекенсем хушшинче çирӗп дисциплина туса хураймаи. Иккӗмӗш черетре Канаш, Вӑрнар, Чкаловски, Шӑмӑршӑ, Тӑвай районӗсенчи всевобуч пункчӗсем вӗренӗве начар результатсемпе вӗçлени çак сӑлтавсенчен килнӗ те ӗнтӗ.

Хуласенчи тата ялсенчи чылай пунктсенче всевобучӑн виççӗмӗш черечӗ çар ӗçне вӗренме тытӑнчӗ. Малтанхи кунсенчех çакӑ палӑрчӗ: çар ӗçне вӗренме тивӗçлисем вӗренӳ пункчӗсене организованно пухӑнаççӗ, занятисене пӗр сиктермесӗр çӳреççӗ, командирсем вӗрентнисене пӗлсе çитме тӑрӑшаççӗ. Всевобуч пункчӗн ӗçне лайӑх организацилесен, вӗренӳ ӑнӑçлӑн пулса пыма пултарасси халех курӑнать. Çывӑх вӑхӑтра ялсенчи пунктсенче пуринче те хӗрӳ ӗç пуçланать. Вӗренӳ ӑнӑçлӑн пулса пытӑр тесен, малтанхи кунсенчех çак ӗçе лайӑх организацилемелле.

Пур гражданӗсене те çар ӗçне вӗрентесси—государствӑн пысӑк та паха ӗçӗ. Çак ӗçе чыслӑн пурнӑçа кӗртме тӑрӑшмалла. Асра тытас пулать: халӗ хаяр вӑрçӑ пырать. Гитлерла Германия хӑйӗн мӗнпур вӑйӗсене пухса, хӗвеланӑçӗнче тӑракан вӑйӗсене Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронта илсе килсе, пӑхӑнтарнӑ çӗршывсенче пысӑк çарсем пухса хатӗрлесе пирӗн Хӗрлӗ Çара хирӗç тӑратрӗ. Гитлерӑн вӑрӑ-хурахла бандисем пирӗн çӗршывӑн пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан центрсене тытса илесшӗн. Пирӗн пуянлӑхсене—нефте, тырпула, чӗртавара тытса илесшӗн, совет халӑхне вӗлерсе пӗтересшӗн, чӗрӗ юлнисене чурасем тӑвасшӑн. Çӗршыв умӗнче пысӑк хӑрушлӑх тӑрать. Çак хӑрушлӑха сирсе яма тӑшмана тытса чарас пулать, тӑшмана тытса чармалла та пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкмалла. Тӑван çӗршывӑн паянхи приказӗ: «Пӗр утӑм та каялла чакмалла мар!».

Совет çӗршывӗн ывӑлӗсем фронтсенче пӗр утӑм каялла чакмасӑр, юлашки юн тумламӗ юлмиччен çапӑçу хирӗнче тӑрса тӑшмана хирӗç çапӑçаççӗ. Нумай пулмасть Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑç енчи фронтра Н-ски стрелковӑй чаçӑн 16 гвардеецӗ, кӗçӗн лейтенант Кочетков ертсе пынипе, хӑюллӑн та хастарлӑн çапӑçса геройла вилӗмпе вилнӗ. 16 гвардеец нимӗçсен 12 танкне хирӗç вӑйлӑн кӗрешнӗ. Çапӑçу пуçлансан, гвардеецсенчен пӗри хӑйӗн çумне гранатӑсем çыхса малти машина айне кӗрсе кайнӑ. Вара танк çунма тытӑннӑ. Геройӑн примерне курса ытти гвардеецсем те гранатӑсен çыххисемпе танксен айне чӑмнӑ. Фашистсен ултӑ машина çунма тытӑннӑ. Ултӑ танкӗ каялла çавӑрӑнса кайнӑ. Пирӗн боецсем тӑван çӗршыва, хӑйсен ашшӗсемпе амӑшӗсене, пиччӗшӗсемпе шӑллӗсене, аппӑшӗсемпе йӑмӑкӗсене хӳтӗлесе çавӑн пек çапӑçаççӗ ӗнтӗ. Всевобуч боецӗсен, алла хӗçпӑшал тытма пултаракан мӗнпур совет гражданӗсен тӑшмана хирӗç çавсем пек паттӑррӑн çапӑçма хӑйсене хатӗрлемелле, çирӗп чӗрелле пулмалла, çар специальноçне вӗренмелле. Çар ӗçне лайӑх пӗлнипе, вӑрçӑра çирӗп пулнипе, тӑван çӗршывӑн кашни метрне сыхланипе вӑрçӑра çӗнтерӳ тӑвас, нимӗçсен фашистла оккупанчӗсене тӗппипех аркатса тӑкас задачӑна пурнӑçа кӗртме пултарӑпӑр.

Тӑван çӗршыв умӗнче пысӑк хӑрушлӑх тӑнӑ вӑхӑтра алла хӗçпӑшал тытма пултаракан кашни гражданинӑн çар ӗçне вӗренес пулать. Çар ӗçне вӗренесси вӑл—пысӑк ӗç. Çак ӗçе тӗплӗн тума, кӗске вӑхӑтрах çар ӗçне вӗренсе çитме тӑрӑшас пулать. Халӗ нумайччен вӗренме вӑхӑт çук. Паян—всевобуч боецӗ, ыран—хӗрлӗ воин. Паянтылра, ыран—фронтра пулма тивет. Çавӑнпа та ӗçрен ерçӳллӗ кашни минутӑпа çар ӗçне вӗренме усӑ курмалла.

ВЦСПС-па ССР Союзӗн Апат-çимӗç промышленность Халӑх Комиссариатӗнче

Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗпе ССР Союзӗн Апат-çимӗç промышленность Халӑх Комиссариачӗ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн 1942 çулти август уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухнӑ.

ВЦСПС-па ССР Союзӗн Апат-çимӗç промышленность Халӑх Комиссариачӗ Шупашкарти эрех завочӗ (директорӗ Фройман, парторганизаци секретарӗ Пегаева, завком председателӗ Малышева юлташсем) август уйӑхӗнче лайӑх ӗçленине палӑртнӑ. Çак завод государство планне тултарса, социализмлӑ ӑмӑртура çитӗнӳсем тунӑ.

ССР Союзне г. Уэнвелл Уилки килсе çитнӗ

Кӑçалхи сентябрӗн 17-мӗшӗнче Куйбышев хулине Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен президенчӗн личнӑй представителӗ г. **Уэнвелл Уилки** килсе çитнӗ.

Аэродром çинче г. Уэнвелл Уилкине Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗ **С. А. Лозовский** юлташ, Куйбышев хула совечӗн председателӗ **П. П. Волков** юлташ, Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссариачӗн протокольнӑй отделӗн заведующийӗ **Ф. Ф. Молочков** юлташ, Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссариачӗн Америкӑри çӗршывсен отделӗн заведующийӗ **Г. Н. Зарубин** юлташ, Куйбышев гарнизонӗн начальникӗ подполковник **Б. Н. Попов** юлташ, Оборона Халӑх Комиссариачӗн тулашри çыхӑнусен отделӗн начальник заместителӗ подполковник **С. Д. Зотов** юлташ, çавӑн пекех тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен посольствин г. **В. Стэндли** пуç пулса тӑракан составӗ, Китай посолӗ г. **Шао Ли-Цзы** тата Англи посольствин советникӗ г. **Л. Баггалией** кӗтсе илнӗ.

Çав кунах г. Уэнвелл Уилки Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн заместителӗ, Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗ А. Я. Вышинский юлташ патӗнче тата Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗ С. А. Лозовский юлташ патӗнче пулнӑ.

БОЛГАРИ ПОЛИЦИЙӖ СОВЕТ СОЮЗӖН ВАРНӐРИ КОНСУЛЬСТВИНЕ ХУЛИГАНЛА ТАПӐННИ

Сентябрӗн 15-мӗшӗнче Болгарире вырӑнти сутуçӗсен тата бульварла хаçатсенчи çыравçӗсен штатски формисене тӑхӑннӑ полицейскисен хулиганла банди Совет Союзӗн Варнӑри консульстви çурчӗ çӗмӗрсе кӗнӗ те, унта ирсӗр ӗçсем тунӑ, вӑл шута консульствӑн кассине хӗçпӑшалпа усӑ курса çаратни те кӗрет.

Совет Союзӗн Болгарири посланникӗ Лаврищев юлташ Болгари правительствине çирӗп протест янӑ. (ТАСС)

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту

Ӑмӑрту ялавне çӳлте тытса

КАНАШ, сентябрӗн 18-мӗшӗ. **(Телефонпа, хамӑр корр.).** Вагонсем юсакан заводӑн коллективӗ виççӗмӗш уйӑх ӗнтӗ ССР Союзӗн Çулйӗр Халӑх Комиссариачӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне хӑйӗн аллинче тытса тӑрать.

Владимир Ильич ячӗпе тӑракан заводра ӗçлекенсем Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва тухма чӗнсе каланине сӳтсе-явнӑ хыççӑн, вагонсем юсакан заводӑн коллективӗ, ӗç тухӑçлӑхне ӳстерсе, Октябрьти аслӑ революци XXV çул тултарнӑ тӗле оборона заказӗсене пурнӑçлас тӗлӗшпе, август уйӑхӗнчипе танлаштарсан, 35 процент ытларах продукци туса кӑларма йышӑннӑ. Заводра ӗçлекенсем çӗнӗ йышши ӗçе йӗркелесе яма, вагонсем юсас плана уяв тӗлне 105 процент тултарма, сентябрьпе октябрь уйӑхӗсенче ӗç тухӑçлӑхне 5 процент хӑпартма, вырӑнти ресурссемпе туллин усӑ курса продукцин хӑйне ларакан хакне сентябрьте—3 процент, октябрьте—4 процент чухлӗ чакарма, кашни рабочие нормӑсене тултарса ӗçлекен тума, сентябрьте 100 çын, октябрьте 100 çын çӗнӗ кадрсем вӗрентсе хатӗрлеме сӑмах пачӗç.

Çавӑнпа пӗрлех завод коллективӗ топливӑна 3,5 процент, электроэнергие 10 процент сахалтарах расходлама, цехсен производство мощноçне пысӑклатма, рационализаци сӗнӗвӗсене 50 таран пухма пулнӑ.

Заводра металлом пухасси çине те çавӑрӑнса пӑхаççӗ. Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура илнӗ обязательствӑсенче металлом пухассипе çулталӑкри плана тултарса, ноябрӗн 11-мӗшчен тиесе ярассине пӑхса хунӑ.

Ӑмӑртӑва тухнӑ хыççӑнах рабочисемпе работницӑсем нумайӗшӗсем производствӑра татах та хастарлӑрах ӗçлеме пуçларӗç. Ӗнер Егорушкин смени задание 125 процент пурнӑçа кӗртрӗ. Çав сменӑра ӗçлекенсем Капралова юлташ нормӑна 141 процент, Маслова—234 процент, Кисин—300 процент, Абрамова—160 процент тултарчӗç.

Вагонсем юсакан цехӑн коллективӗ сентябрьпе октябрь уйӑхӗсенчи плансене 105-шер процент тултарма пулчӗ.

Слесарьсен бригадин мастерӗ Дмитриев юлташ васкавлӑ задание тултарас тӗлӗшпе хӑй слесарь пулса ӗçлеме тытӑннӑ.

Тимӗрçӗ цехӗнче ӗçлекенсем сентябрьте плана 102 процент, октябрьте—105 процент пултарма, рационализациллӗ сӗнӳсем 10 пухма йышӑннӑ.

Çапла, заводра социализмлӑ ӑмӑрту вӑйланса пырать.

П. НИКОЛАЕВ.

Железнодорожниксем Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура

ÇӖМӖРЛЕ, сентябрӗн 18-мӗшӗ. **(Телефонпа, хамӑр корр.)** Чугунçул çинчи дежурнӑйсемпе стрелочниксем тата лини çинче ӗçлекенсем паян ирех станци начальникӗн шӳлӗмне пухӑнчӗç. Станци начальникӗ Селезнев юлташ Владимир Ильич ячӗпе тӑракан завод коллективӗн «Правда» хаçатра пичетленсе тухнӑ чӗнӗвне вуласа парать, ӑна кашниех пысӑк тимлӗхпе итлерӗ.

— Пирӗн станци коллективӗ, — тет Селезнев юлташ, — чылай кӑтартусем енӗпе лайӑх ӗçлесе пыма пуçларӗ. Эпир поездсене кӗтсе илес тата ӑсатас тӗлӗшпе ӗçе лайӑх, тӗп-тӗрӗс туса пыма тытӑнтӑмӑр. Анчах тунӑ ӗçсем çителӗксӗр-ха. Пирӗн задача — малашне татах та лайӑххрах ӗçлесси, Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци XXV çул тултарнине пур участоксенче те ӗçре пысӑк улшӑнусем тунипе, ӗçсене лайӑхлатнипе кӗтсе илесси. Кашни поездах вӑхӑтра кӗтсе илсе, пӗр минута та ытлашши тӑратмасӑр ӑсатмалла.

Станци начальникӗн сӗнӗвӗсене пӗр шухӑшлӑ пулса йышӑнаççӗ. Вӗсем Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, хӑйсем çине поездсене йӗркеллӗ çӳретме, хӗле пур енчен те хатӗрленнипе кӗтсе илме, техника правилисене çирӗппӗн пӑхӑнса ӗçлеме обязательствӑсем илчӗç.

Шупашкарти предприятисенче

Çӗвӗçсен обязательствисем

Тумтирсем çӗлекен «Инпошив» мастерскойӗнчи рабочисемпе работницӑсем сентябрӗн 17-мӗшӗнче пулнӑ митингра Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнма йышӑннӑ. Вӗсем митингра йышӑннӑ резолюцире çапла çыраççӗ:

«Пирӗн çӗршыв умӗнче пысӑк хӑрушлӑх тӑрать. Çав хӑрушлӑха сирсе ямалла. Вӑрçӑра çӗнтерме тӑшмана хирӗç хытӑ кӗрешес пулать. Çӗнтерӳ тума совет çыннисен пӗтӗм вӑя хурса тӑрӑшмалла, нихӑçанхинчен организованнӑрах, çирӗпрех тата дисциплиналлӑ пулмалла».

Владимир Ильич ячӗпе тӑракан заводӑн коллективӗ чӗнсе калани çине ответлесе, «Инпошив» мастерскойӗнче ӗçлекенсем хӑйсем çине çакӑн пек обязательствӑсем илчӗç:

Сентябрь уйӑхӗнчи производство планне 115 процент ирттерсе тултарма;

продукцин хӑйне ларакан хакне август уйӑхӗнчипе танлаштарсан 2,5 процент чакарма;

электричество энергине август уйӑхӗнчипе танлаштарсан 5 процент сахалтарах расходлама;

рационализаторла ӗçсем тӑвасси тата ку енӗпе рабочисен сӗнӗвӗсене пухасси çине ытларах çавӑрӑнса пӑхма;

çӗнӗ рабочисене 10 çынран кая мар вӗрентсе хатӗрлеме.

Мастерскойри рабочисемпе работницӑсем çар валли тумтирсем çӗлессипе пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗçлеççӗ.

Ӗç тухӑçлӑхне хӑпартма пулаççӗ

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнасси çинчен сӳтсе-явса, Шупашкарти эрех тӑвакан заводри рабочисем, инженерсем тата техниксем сентябрь тата октябрь уйӑхӗсенчи плансене 10 процент ирттерсе тултарма йышӑннӑ. Çавӑн пекех вӗсем ӗç тухӑçлӑхне хӑпартассипе задание 130 процент пурнӑçа кӗртме, урӑхла каласан, август уйӑхӗнчипе танлаштарсан 5 процент ытларах ӳстерме сӑмах панӑ.

Завод коллективӗ продукцин хӑйне ларакан хакне 6 процент, электроэнерги расходлассине 8 процент чакарма; топливӑна перекетлесе, 2 процент каярах расходлама; рационализаторла сӗнӳсем 5-рен кая мар пухма сӑмах панӑ.

Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑра

Фронта валли ытларах продукци парас тӗлӗшпе Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, Шупашкарти Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑн коллективӗ сентябрь уйӑхӗнчи плана çак уйӑхӑн 27-мӗшӗ тӗлне, октябрь уйӑхӗнчи плана çав уйӑхӑн 25-мӗшӗ тӗлне тултарма обязательство илнӗ.

Фабрикӑри рабочисемпе работницӑсем Октябрь уявӗ çитиччен август уйӑхӗнчипе танлаштарсан ӗç тухӑçне 20 процент ӳстерме, лайӑх пахалӑхлӑ продукци туса кӑларма социализмлӑ ӑмӑртӑва пурне те хутшӑнтарма, кашни рабочиех плана тултарса пыракан тума, ӗçпе çӗлеме çӗнӗрен 40 çынна вӗрентме, пирсемпе çиппене перекетлеме, электроэнергие перекетлеме, продукцин хӑйне ларакан хакне август уйӑхӗнчипе танлаштарсан 2 процент чакарма сӑмах панӑ.

Социализмлӑ ӑмӑртса ӗçлесси ӑнӑçуллӑ пулса пытӑр тесе, фабрика коллективӗ производствӑра çирӗп йӗрлелӗх тӑвассишӗн кӗрешме пулнӑ.

Ильич ячӗпе тӑракан заводри коллективӑн чӗнӗвне сӳтсе-яваççӗ

ÇӖМӖРЛЕ. **(Телефонпа, хамӑр корр.).** Комбинатӑн пур цехӗсенче те рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем Владимир Ильич ячӗпе тӑракан заводӑн коллективӗ Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва тухма чӗнсе каланине сӳтсе-яваççӗ. Çак чӗнӗве агитаторсем рабочисене вуласа параççӗ.

— Аслӑ уява пирӗн кашнин ӗçре çӗнӗ çитӗнӳсем тунипе кӗтсе илмелле. Эпӗ ку таранччен нормӑна 200 процент таран тултарса ӗçлерӗм. Ӑмӑртӑва хутшӑнса, эпӗ ӗç тухӑçлӑхне тата 30 процент ӳстерме, отлично пахалӑхлӑ продукци туса кӑларма пулатӑп,—тесе калать машиннӑй отделенинчи çамрӑк рабочи Яковлев юлташ.

Филимонов юлташ ертсе пыракан цехри тимӗрçӗ Хромин юлташ хӑйӗн молотобоецӗпе—Шайко юлташпа пӗрле август уйӑхӗнчи задание 405 процент тултарнӑ. Вӗсем ку уйӑхра тата тимлӗнрех ӗçлеме пулаççӗ.

Аслӑ уява колхоз уборка ӗçӗсене вӗçленипе кӗтсе илет

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Медикассинчи «Иккӗмӗш пятилетка» колхоз членӗсем Владимир Ильич ячӗпе тӑракан 70-мӗш номерлӗ заводӑн коллективӗ фронта вӑйлӑн пулӑшас тӗлӗшпе Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарма чӗнсе каланине пысӑк çӗкленӳпе сӳтсе-яврӗç, аслӑ уява ӗçре пысӑк çитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме ӑмӑртӑва хутшӑнса, хӑйсем çине конкретлӑ обязательствӑсем илчӗç.

«Иккӗмӗш пятилетка» колхоз тырпулсене уйран пысӑк пахалӑхпа пухса кӗртрӗ. Кӗр тыррисене планпа пӑхнинчен икӗ кун, çурхи тырӑсене пилӗк кун маларах вырса пухрӗ. Колхоз кӗлтесене 25 кун хушшинче капана хывса пӗтерӗ.

Нумай колхозниксем, колхозницӑсем уборкӑри ӗçре çӗрне-кунне пӗлмесӗр тимлӗн ӗçлеççӗ. Тырӑ вырнӑ çӗрте А. Федорова, О. Викторова, А. Степанова колхозницӑсем ӗç нормине тӑтӑшах 130—150 процент тултарса пынӑ. М. Михайлова, С. Ефремова, Ф. Димитриева колхозницӑсем тырра кӗреплеллӗ çавасемпе вырса ӗç нормине кулленех ирттерсе тултарнӑ. А. Фадеев, Д. Емельянов колхозниксем кунсеренех 20-шер лав кӗлте турттарнӑ, 65 çулти колхозник Еремеев юлташ кунне 50-шар урапа кӗлтене капанланӑ.

Тӑван çӗршывӑн пӗтӗм ӗççыннийӗсем фронта вӑйлӑн пулӑшас тӗлӗшпе аслӑ Октябрьти революци XXV çул тултарнӑ уява çӗнӗ пысӑк çӗнтерӳсемпе кӗтсе илме социализмлӑ ӑмӑртӑва тухаççӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсен чыслӑ тивӗçӗ—аслӑ уява уборка ӗçӗсене пӗтӗмӗшпех вӗçленипе кӗтсе илесси пулса тӑрать.

«Иккӗмӗш пятилетка» колхоз членӗсем аслӑ Октябрь умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса хӑйсем çине çакӑн пек обязательствӑсем илчӗç:

Кӗрхи çӗртме тӑвас ӗçе колхоз сентябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне вӗçлет, çӗрулми, пахча-çимӗç, мӗнпур техникӑллӑ культурӑсене сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех пухса кӗртет.

Государствӑна тырӑ, техникӑллӑ культурӑсем, пахча-çимӗçсем, сентябрӗн 30-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех парса татать.

Октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне колхоз авӑн çапса пӗтерет.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Авӑн çапнӑ çӗрте тӑккаланчӑксем пулмалла мар

Тухӑçлӑн ӳстернӗ тырпула вӑхӑтра вырса пухнӑ хыççӑн, халӗ ӑна пӗр тӑккаламасӑр çапса илмелле. Мӗнпур пек тырра пӗтӗмпех государствӑн тата колхозӑн амбарӗсене типтерлесе кӗртмелле. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи малта пыракан колхозсем кӑçалхи пысӑк тухӑçлӑ тырпула кӗске срокра тата пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртрӗç, кӗлтесене капана хывас, авӑн çапас ӗçсене организованно тата пысӑк хӑвӑртлӑхпа туса пыраççӗ.

Анчах та хӑшпӗр колхозсен руководителӗсем кӗлтесене капана хывас, авӑн çапас ӗçсенче пулса пыракан пысӑк тӑккаланчӑксене пӗтерес тӗлӗшпе кирлӗ мерӑсем йышӑнмаççӗ. Тутаркассинчи «Моряк» колхозра (председателӗ Костюшкин юлташ) авӑн çапнӑ çӗрте тата кӗлтесене капана хывнӑ чухне тырра нумай тӑкаласçӗ. Итем çинче тырӑ йӗркесӗр çапаланса выртать. Унтах ырашӗ те, сӗлли те, пӑрçа та çумӑр айӗнче йӗпенсе выртать. Итеме кирлӗ таран касса тасатман пирки, капансене кунта çӗрем çине лартаççӗ, паха та хаклӑ тырӑ тӑккаланса сая каять. Бригадирсем те, колхоз председателӗ те итем çинче кашни кунах пулаççӗ, анчах тырӑ çакӑн пек тӑккаланни çине çавӑрӑнса пӑхмаççӗ.

Тӑван çӗршыва нимӗç захватчикӗсене хирӗç хаяр çапӑçусем пыраççӗ. Çак вӑхӑтра кашни килограмм тырӑ Хӗрлӗ Çара фронтра çӗнтерӳ тума пулӑшакан вӑй пулса тӑрать. Кашни килограмм тырра типтерлӗн çапса кӗртмелле. Авӑн çапнӑ çӗрте тӑккаланчӑксем пачах пулмалла мар.

С. ПЕТРОВ

Кӗрхи çӗртме тӑвас ӗç вӑраххӑн пырать

ШӐХАСАН. **(Хамӑр корр.).** Сентябрӗн 10-мӗшӗпе 15-мӗшӗ хушшинче, график тӑрӑх, районри колхозсен 1800 гектар кӗрхи çӗртме тумалла пулнӑ пулсан, çак юлашки кун тӗлне мӗн пурӗ те 650 гектар ытларах çеç сухаланӑ. Малтанхи графиксене пӗрле шутласан та район кӗрхи çӗртме тӑвас плана 13,6 процент кӑна пурнӑçланӑ.

Хӑшпӗр колхозсенче кӗрхи çӗртме тума уйрӑм бригадӑсем организациленӗ. Анчах çав бригадӑсем те çителӗксӗр ӗçлени палӑрать. «Красный трактор» колхозра паянхи кун тӗлне 35 гектар, «Пинер» колхозра 28 гектар, Ушанарти Калинин ячӗпе тӑракан колхозра 40 гектар, «Ударник» колхозра 32 гектар çеç сухаланӑ. Çапла вара çак колхозсем çӗртме тӑвас плана 16—25 процент çеç пурнӑçланӑ.

Чылай колхозсем çӗртме тума халӗ те тытӑнман. Кӗрхи çӗртме тӑвас ӗç кая юлса пынин сӑлтавӗ—колхоз руководителӗсем ӗçе черетпе туса пыма пӑхни тата вӗсем туртӑм вӑйӗпе тӗрӗс усӑ курманни пулать. Нумай колхозсем, кӗлтесене алӑпа йӑтса капана хывас ӗçе организацилемен пирки, лаша вӑйне пӗтӗмӗшпех кӗлте кӳнӗ çӗре яраççӗ.

Калас пулать, ВКП(б) райкомӗн ялсене янӑ хӑшпӗр представителӗсем колхозсене тивӗçлипе пулӑшмаççӗ. Районри çӗрӗç пайӗн старши зоотехникне Н. Андреев юлташа Чуракасси ялсоветӗнчи колхозсене янӑ. Анчах та вӑл ялсоветне кӗрекен колхозсенче питӗ сахал пулать. Ялсоветне кӗрекен «Правда», «III Интернационал» колхозсем уйхир ӗçӗнче питӗ кая юлнӑ. «III Интернационал» колхозра ӗçе тӗрӗс организацилеменнине пула, колхоз кӗрхи акана та кая юлса вӗçлерӗ, кӗрхи çӗртме тӑвас ӗçре те колхоз кая юлса пырать.

С. ШАДИН.

Тырпула сыхлас ӗçпе учет ӗçне лайӑхлатмалла

ÇӖМӖРЛЕ. **(«Чӑваш Коммуни» корр.).** **Пур колхозсем те тенӗ пекех уйри тырпула вӑхӑтра пуçтарса кӗртрӗç.** Халӗ вӗсем авӑн çапаççӗ. Çак вӑхӑтра ӗнтӗ уйрӑмӑнах итем çинчи тата амбарсенчи тырпула хурал тӑрассине, çапнӑ тырпула çирӗп учета илессине нихӑçанхи пек мар лайӑх организацилемелле. Куна кашни колхоз руководителӗн çирӗп пӗлсе тӑмалла.

Анчах районри уйрӑм колхозсенче тырпула сыхлас тата учета илес ӗçе чӑтма çук япӑх туса пыраççӗ. Колхоз амбарӗсене хураллама хуралçӑсем уйӑрса лартнӑ пулин те, амбарсенчен тырпул сухалнӑ тӗслӗхсем пулаççӗ.

Мӑн Улхашри «Красноармеец» колхозра акӑ хуралçӑсем сахал мар. Анчах колхоз правлени членӗсем вӗсен ӗçне тӗрӗслемеççӗ. Çавна пула кунта юлашки вӑхӑтра колхоз пурлӑхне сыхлас ӗç япӑхланнӑ. Хуралçӑсен тимсӗрлӗхне пула ӗнтӗ ку колхозра кӗске вӑхӑт хушшинчех вуншар пӑт тырӑ çухатнӑ. Çапла, комбайнер пулнӑ С. Медведев 273 килограмм ыраш, возчик А. Горбунов 160 килограмм тулӑ, возчик П. Швецов 50 килограмм, бригадир С. Ванюков 25 килограмм тырӑ вӑрланӑ. Çак кунсенче вӗсен ӗçӗсене районри халӑх сучӗ пӑхса тухрӗ, колхоз пурлӑхне çаратакансем пурте закон тӑрӑх айӑпланаççӗ.

Çакӑн пек киревсӗр тӗслӗх вӑл «Красноармеец» колхозра хураллас ӗçе кӑна мар, учет ӗçне те япӑх туса пыниччен килнӗ. Кунта çапнӑ тырпула йышӑнассине халӗ те кирлӗ пек организацилемен-ха.

Колхоз пурлӑхне сыхлас ӗçе Тӑван ялсоветӗнчи «Ударник», Егоркинӑри «Большевик» колхозсенче те япӑх организациленӗ. Амбарсене, итемсене хураллакансем час-часах сывӑраççӗ, е пӗр вырӑнта ларaççӗ. Ахальтен мар ку колхозсенче те юлашки вӑхӑтра тырӑ çухални пулнӑ. М. Бельцевӑпа Е. Вуникова колхозницӑсем 110 килограмм ыраш вӑрланӑ.

Колхоз пурлӑхне тӗрӗс-тӗкел пӑхса тӑрасси—кашни колхозӑн тӗп задачи пулса тӑрать. Ӑна çирӗппӗн пурнӑçа кӗртсе пымалла.

Х. ЛИСИН.

СССР Наркомземӗ шкул ачисене наградӑланӑ

Чӑваш республикинчи пуçламӗш тата вӑтам шкулсенче вӗренекенсем тырпула уйран пуçтарса кӗртнӗ çӗре лайӑх хутшӑнса ӗçленине паллӑ туса, СССР Çӗрӗç Халӑх Комиссарӗ И. Бенедиктов юлташ хӑйӗн приказӗ тӑрӑх, Комсомольски районри Комсомольски ялӗнчи пуçламӗш шкулта вӗренекен В. Лукинана, Долговӑна, А. Мартынова, тырӑ вырнӑ çӗрте куллен 250 кӗлте вырӑнне 350 кӗлте вырса нормӑна ытлашшипех тултарса ӗçленӗскерсене; Пӑрачкаври (Пӑрачкав р.) вӑтам шкулта вӗренекен Виктор Бусыгина, тракторпа ӗçлесе 270 ӗçкунӗ илнӗскере; Çӗрпӳ районӗнчи «Красный флот» колхозри колхозник-подростока Петр Николаевич Осипова, жнейкӑпа кулленех 8-шар гектар тырӑ вырнӑскере, «Социализмлӑ ялхуçалӑхӗн отличникӗ» значокпа наградӑланӑ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче тата Моздок районĕнче хаяррăн çапăçнă.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине тăвата ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче хаяр çапăçусем пынă. Противник, хулана хӳтĕлекенсем хирĕç тăнине кирек мĕнле çухатусем тӳссе те пулин çĕнтерессшĕн пулса, пирĕн позицисене пĕр тăтăшах атакăлать. Гитлеровецсен уйрăм отрячĕсем çĕрле хулан хăшпĕр урамĕсене кĕрсе кайма пултарнă. Урамсенче йывăр çапăçусем пуçланса кайнă, вĕсем штык вĕççĕн тăрса çапăçнипе вĕçленнĕ. Каç пуласпа противникăн пирĕн войскăсем тăракан вырăна кĕрсе кайнă группине пурне те каялла сирсе янă. Нимĕçсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче çĕршер виле, персе çĕмĕрнĕ орудисем, танксем пăрахса хăварнă. Крылов юлташ ертсе пыракан боецсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 54 танкне, 21 орудине, 12 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра пирĕн гвардеецсем противникăн пехотин икĕ батальонне аркатса тăкнă, 8 танк, миномётсен 2 батарейине тата 15 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сире-сире янă. Н-ски часть нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хăваласа кăларнă. Халăх пурăнакан çав пунктшăн пынă çапăçусенче нимĕçсен 8 танкне, 4 орудине, 11 автомашинине тата 300 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăç-нерехре тинĕс пехотин чаçĕсем противникăн темиçе атакине сирсе янă тата тăшманăн пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

Токарев юлташ командир пулса тăракан бомбардировщиксен чаçĕ Хура тинĕс çинчи пĕр порта, нимĕçсем оккупациленĕскере, тапăннă. Бомбăсем тӳрĕ лекнипе тăшманăн 2 тральщикĕ, 3 торпеднăй катерĕ путнă тата боеприпассен склачĕ сирпĕнсе кайнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем, танкистсем пулăшса пынипе, халăх пурăнакан пĕр пункта атакăланă та хаяррăн çапăçнă хыççăн унтан гитлеровецсене хĕссе кăларнă. 9 оруди, 14 пулемет, 2 радиостанци тытса илнĕ тата противникăн пехотине виçĕ батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче 100 агневой точка ытла пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр полка çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсем 18 оруди, 41 пулемет тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен пехоти, танксемпе хӳтĕленсе пырса, пирĕн подразделенисене атакăланă. Пирĕннисем вăйлăн хирĕç тăнине курса, нимĕçсем кăнтăрла çапăçăва тата икĕ полк пехота, 40 танк кĕртсе янă та пирĕн чаçсене пăртак каялла чакарнă. Пирĕн боецсем хирĕç пырса çапса, гитлеровецсене малалла кайма чарнă, унтан вĕсене сирсе янă та хăйсен позицийĕсене каялла туртса илнĕ. Çав çапăçура 22 танк пĕтерсе тăкнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1.200 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен çулĕсене ăнăçлăн пăсаççĕ. Сентябрĕн пуçламĕшĕнче партизансем чугунçула ун тăрăх поезд пынă вăхăтра сирпĕнтерсе янă. Паровозпа 10 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче 150 гитлеровец ытла пĕтнĕ.

* * *

Нимĕç унтер-офицерĕ Гергардт Линреман çумĕнче Туртран (Германия) пĕр Генрих ятлă çын çырнă çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Пĕлтĕр кашни çĕртех Российăна хирĕç пыракан вăрçă темиçе уйăхран пĕтет тесе кăшкăратчĕç. Пирĕн стратегсем намăса тухрĕç. Кĕтмен çĕртен ку вăрçă питĕ вăраха тăсăлакан вăрçă пулса кайрĕ. Вăрçă малалла тăсăлнăçемĕн вăл пирĕншĕн ăнăçлăн пĕтес шанчăк сахалланса пырать. Ку вăрçă пиртен мĕн чухлĕ тата мĕнле йывăр жертвăсем кăна ыйтмĕ-ши? Ют çĕршывсенчен килнĕ çынсем çук хуласенче çын питĕ сахал, унта пуш-пушах. Сана çакна пĕлтерме пултаратăп: вăрçă пуçланнăранпа 14 уйăх хушшинче пирĕн пĕчĕк хуларан кайнă çынсем хĕвелтухăçĕнче 800 çын ытла вилнĕ ĕнтĕ. 1914—1918 çулсенчи вăрçăн тăватă çулĕ хушшинче унтан икĕ хут сахалтарах пĕтнĕччĕ».

* * *

Сентябрь пуçламĕшĕнче Схаген (Голландия) хули районĕнче хĕçпăшалланнă голландецсен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен аэродромне тапăннă. Аэродромăн хуралĕпе хаяррăн тытăçса, Голланди патриочĕсем 16 гитлеровеца вĕлернĕ, унтан нимĕçсен 6 самолетне тата горючи складне çунтарса янă.

Сентябрĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Сентябрĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче тата Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăç хĕрринче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотин атакисене сире-сире янă. Толбухин юлташ командир пулса тăракан чаçăн артиллеристĕсем нимĕçсен 12 танкне тата гитлеровецсене икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра противникăн икĕ батальон пехоти хулан пĕр урамне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем нимĕçсене пулеметсемпе тата автоматсемпе вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. Унтан, штык вĕççĕн çапăçма тытăнса, гитлеровецсене аркатса тăкнă, гитлеровецсем, вара каялла чакнă, вĕсен 500 салтакĕпе офицерне çити вилнĕ е аманнă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 19 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем çĕрле противника атакăланă та 4 танк пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Çав çапăçура старши сержант Аварин юлташ хăюлăхпа хастарлăх кăтартнă. Вăл нимĕç пулеметчикĕ патне шуса пынă та ăна вĕлернĕ, унтан, çав тытса илнĕ пулеметпа персе, 30 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Танкист Брехов юлташ тăшманăн 5 противотанковăй орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăç-нерехре Сидоров юлташăн подразделенийĕнчи морякĕсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 3 танкне, противотанковăй пушкине пĕтерсе тăкнă тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Карели фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Кузнецовпа Коновалов лейтенантсем ертсе пыракан боецсем противникăн позицийĕсене атакăланă. Белофиннсем, çакна пĕрех те кĕтменскерсем, хĕçпăшалĕсемпе боеприпасĕсене пăрахса каялла чакнă. Противник часах темиçе хутчен контратака тунă, çав контратакăсене пирĕн боецсем сирсе янă. Çапăçура противникăн салтакĕсене икĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, артиллери батарейине тата 4 станковăй пулемета пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: противотанковăй оруди, 10 пулемет, 2 радиостанци, винтовкăсем тата гранатăсем тытса илнĕ.

* * *

Украинăн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче гитлеровецсем тырă бази тунă, унта вĕсем хресченсенчен çаратса илнĕ тырăсене хывнă. К. юлташăн партизанла отрячĕ складсен хуралне тапăннă та 27 нимĕç салтакне тата 2 офицера вĕлерсе пăрахнă. Тырăн чылай пысăк пайне партизансем хресченсене салатса панă. Разведкăран нимĕçсен карательнăй экспедицийĕ сывăхарса килнине пĕлсессĕн, совет патриочĕсем юлнă тырра хрaç çити сапнă та складсене çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 293-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 510-мĕш полкран тыткăна парăннă салтак Роман Г. нимĕç влаçĕсем тыткăна лекнĕ совет воинĕсене тискеррĕн тыткалани çинчен каласа панă. «1942-мĕш çулхи августăн 22-мĕшĕнче эпĕ Орша станцийĕнче пултăм. Унта товарнăй вагонсем тăратчĕç, çав вагонсенче тыткăнри вырăс çыннисем, аманнăскерсем, выртатчĕç. Çав тыткăнри çынсене хуралласа пыракан нимĕç салтакĕсем мана çапла каларĕç: вырăссем ĕнтĕ ултă талăк нимĕнле апат та çимен, терĕç. Каярахпа эпĕ выçăпа вилнĕ красноармеецсен виллисене вагонсенчен кăларе-кăларе пăрахнине хам куртăм. Вагонсенче юлнисем ыртсе çӳрекенсене пăртак та пулин пыв пама йăлăнаççĕ, анчах та хурал никама та çывăха ямарĕ. Эпĕ 293-мĕш пехотнăй дивизин командирĕн — Фюрст генералăн приказне пĕлетĕп, çав приказра тыткăна лекнĕ вырăс çыннисем çинчен тумтирĕсемпе ата-пушмакĕсене хывса илсе, вĕсене персе пăрахма хушнă».

* * *

Франци патриочĕсем Кале станцийĕнчен инçех мар вырăнта нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Булоньре чугунçул станцийĕн оборудованине стройран кăларнă, çавна пула поездсем çӳрессине нумай вăхăт пăсса хунă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Противникăн тинĕс çинчи базисене пыра-пыра çапни

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛĂ БАЛТИКА ФЛОЧĔ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Разведка нимĕçсем Т. портĕнче транспортсене тиени тата пушатни çинчен пĕлтернĕ. Çав операцие путлантарса лартма, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе портри сооруженийĕсене пĕтерсе тăкма Совет Союз Геройĕн Челноков юлташăн подразделенине хушнă.

Çĕр тĕттĕм пулнă, вырăнĕ-вырăнĕпе çумăр çунă. Самолетсем противникăн территорийĕ тĕлĕнче чылай вĕçнĕ. Тĕллев патне пырса çитнĕ чухне совет летчикĕсене зенитнăй батарейăсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. Анчах çакна пăхмасăрах, Ведмеденко, Деревянных, Борзов летчиксем хăйсен бомбисене тивĕçлĕ вырăна пăрахнă. Портра 5 пушар тухнă, вăйлă икĕ взрыв пулнă.

Фашистсен К. ятлă базине тапăнас ĕçе Челноков юлташ пуçарса пынă. Базăн портри сооруженийĕсене хăватлăн пыра-пыра çапнă. Çав каçхинех çĕрле вĕçекен штурмовиксем тăшманăн огневой точкисем çине темиçе хутчен вĕçсе пыра-пыра тапăннă.

С. тата У. районĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă, артиллерин 4 батарейине тата миномётсен 5 батарейине пусарса лартнă, 2 прожектора пĕтерсе тăкнă. Çĕрлехи штурмовикăсенче Калинин, Мошев, Кривоцапов летчиксем уйрăмах пысăк хăюлăхпа тавçăрулăх кăтартнă.

И. БОНДАРЕНКО.

Мацуев комсомолецăн паттăрла ĕçĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Противникăн çирĕплетнĕ пунктĕнче, шалта, хаяр çапăçу пынă. Совет боецĕсен штурм тăвакан ушкăнĕ чылай дзотсене çавăрса илсе пуçланă, çав вăхăтра нимĕçсем флангран пеме тытăннă. Çавăн пек пенине пула наступлени тăвакан боецсем çĕр çумне выртнă, вĕсем малалла куçма пултарайман.

Пĕр самантлăха çĕкленнĕ красноармеец Федор Мацуев, юн юхтарса, çĕре тăрăннă. Вăйне пухса, вăл хăйĕн суранне çыхса лартнă та, малалла шума тытăннă. Вăл, каялла çавăрăнса пăхмасăр, дзот патнелле шунă. Боец хăйĕн кăвакарса кайнă тутисене çыртса лартнă, урăх вырăнта çапăçакан боецсем вăл халран кайнине курнă. Дзот патнех çитсен, Мацуев каялла çавăрăнса пăхнă та, çĕр çине йывăррăн тĕшĕрĕлсе аннă.

Тепĕр темиçе секундăран тăшманăн огневой точки пирĕн наступлени тăвакан боецсем çине татах вут-çулăм тăкма тытăнчĕ. Пулемет шатăртатнипе боец тăна кĕнĕ. Вăл, пуçне çĕклесе ура çине тăнă та, пиçиххи çумĕнчен противотанковăй граната вĕçертсе илсе, дзот патнелле чупса кайнă. Взрыв пулнă сасă илтĕннĕ. Тăшманăн пулемечĕ ларнă çĕртен тусанпа тĕтĕм çĕкленнĕ.

Çирĕплетнĕ пунктри тăшманăн гарнизонне вĕлерсе пĕтерсен, красноармеецсем дзот çĕмрĕкĕсем айĕнчен Федор Мацуевăн ӳтне кăларнă. Дзотра нимĕç салтакĕсен 10 вилли тата çĕмĕрĕлнĕ пулемет выртнă.

Çапла хăйĕн юлташĕсен пурнăçĕсене хӳтĕлесе вилнĕ Мацуев комсомолец.

Старши политрук М. ГРОССМАН.

Селезнева санинструкторăн паттăр ĕçĕ

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Тăшман халăх пурăнакан пĕр пункт çине, фашистсенчен нумаях пулмасть каялла тытса илнĕскер çине, бомбăсем пăрахнă чухне пĕр çурт çунса кайнă; çав çуртра гвардин кавалери полкĕн йывăр аманнă 20 боецĕпе командирĕ выртнă. Полкăн санинструкторĕ Нина Селезнева аманнисене çунакан çуртран илсе тухма пуçланă. Çӳлтен бомбăсем пăрахса тăнине пăхмасăрах, вăл аманнисене пурне те унтан илсе тухнă.

Пирĕн земляксем

Бригаднăй комиссар В. З. Мистрюков

1919-мĕш çул. Совет çĕршывне тăшмансем йĕри-таврах çавăрса илнĕ. Çĕршыва умне хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра ял вĕçĕнчи пĕр пĕчĕк пӳртре пурăнакан Захар Ефимовăн 19 çулхи ывăлĕ Василий хăйĕн ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне тухса кайть.

Граждăн вăрçи пĕтсен те Василий Хĕрлĕ Çар ретне юлнă. Вăл хăйĕн пĕлӳлĕхне куллен ӳстерсе пынă, самрăк красноармеецсене çар ĕçне вĕрентме пулăшса, çирĕп те паттăр пулма вĕрентсе пынă. 23 çул хушши тăван Хĕрлĕ Çаршăн ĕçлесе, Василий Захарович Мистрюков çĕршыв умĕнче паха ĕçсем сахал мар тунă. Вăл халĕ бригаднăй комиссар, Н-ски чаçăн политотдел начальникĕ. Вăл Хĕрлĕ Çаршăн ырми-канми ĕçлет, пысăк пĕлӳллĕ, çирĕп дисциплинăллă красноармеецсем вĕрентсе хатĕрлет. Халĕ, отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра, Мистрюков юлташ фронтра. Вăл хăйĕн пĕтĕм ĕçне нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕр çинчен шăлса ывăтас шухăшпа туса пырать. Нумаях пуламсть, «Чăваш Коммуни» хаçатра пичетленсе тухнă çырура, Н-ски чаçри чăваш красноармеецĕсем çапла çырчĕç: «...Эпир пирĕн землякăн — политотдел начальникĕн Мистрюков юлташăн пархатарлă ĕçĕсемпе тивĕçлипе мухтанатпăр. Вăл пире нимĕç оккупанчĕсене аркатма куллен вĕрентсе пырать».

Калинински районри Шуркассинчи «Социализм» колхозăн членĕсем хăйсен землякĕн пултаруллă ĕçĕсемпе тивĕçлипех мухтанаççĕ. Вĕсем ĕçсене хастарлă туса пыраççĕ. Колхоз уйри тыр-пулне вăхăтра кĕртсе пĕтернĕ. «Социализм» колхозран пирĕн пата çапла çыраççĕ: «Халĕ пахча-çимĕçсене пуçтарас, кантăр çапас, арăн çапас, çĕрулми кăларас ĕçсене вăрçă вăхăтĕнчи пек вĕçлеме пулатпăр. Мистрюковăн çемьи пирĕн «Социализм» колхоза май уйăхĕнче куçса килчĕ. Çак вăхăтранпа Мистрюков юлташăн арăмĕ тата хĕрĕ — Галя тăрăшса ĕçлесе, кĕске вăхăтрах 100 ĕçкунĕ ытла турĕç. Эпир хамăр земляка сывлăх сунатпăр. Тăшмана çапса аркатма фронта татах та ытларах пулăшса пыма пулатпăр».

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Большевизм историне яланах вĕренсе пымалла

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Канаш районĕнчи коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерессипе те çине тăрса ĕçлеççĕ.

Районри парторганизацинчи ВКП(б) членĕсемпе кандидачĕсем пурĕ 80 çын «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе тухнă. Парти членĕсем В. Изюмов, К. Петухов, Д. Васильев, Ф. Антонов, А. Васильев т. ыт. те кĕске курса вĕренсе тухнă хыççăн Маркс, Энгельс, Ленин тата Сталин произведенийĕсем тăрăх большевизм историне вĕренме тытăннă.

Анчах пирĕн хăшпĕр коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерессипе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Вĕсем парти историне тăтăшах вĕренсе пыма «вăхăт çук» теççĕ. Тĕслĕхрен, районри типографи директорĕ Д. Бык юлташ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» 2 сыпăкне анчах вĕренсе тухнă. ВКП(б) членĕн кандидачĕ Я. Григорьев (Шаккăл) «кĕске курсăн» 4 сыпăкне вуласа тухнипех лăпланса ларнă. Çавăн пекех райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Т. Орлов, коммунистсем И. Викторов (Шелттем), Р. Петров (Аманкасси) тата ытти хăшпĕр юлташсем те «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе конспектсем çырса пĕтермен. Парти историне учебник тăрăх вĕренсе пĕтернĕ ытти коммунистсем марксизм-ленинизм классикĕсен уйрăм произведенийĕсене вĕренме пуçăнман.

Парти вĕренĕвĕ çакнашкал çителĕксĕр пулса пынине ку ĕç çине пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем çителĕксĕр çавăрăнса пăхнипе çеç ăнлантарса пама пулать. Райсовет исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ А. Орлов юлташ), сăмахран, 1942 çул пуçланнăранпа та парти историне вĕренес ыйтăва коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе-явман. Çавăн пекех леспромхоз çумĕнчи парторганизацин секретарĕ Федоров юлташ та ку ыйтăва коммунистсен умне çивĕччĕн лартман.

Коммунистсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерсе пырас ыйту çине ВКП(б) пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсен ытларах çавăрăнса пăхас пулать.

П. СЕРГЕЕВ,
ВКП(б) Канаш райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Çамрăксем комсомола кĕчĕç

Çак кунсенче комсомолăн Мăн Явăшри (Калинински район) пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Н. Кошкин) 8 çамрăка ВЛКСМ ретне илчĕ. Вĕсенчен 4-шĕ хĕрачасем. Комсомола кĕнисем пурте колхоз производствинче колхозниксемпе колхозницăсене пример кăтартса ĕçлеççĕ.

И. ФЕДИНГИН.

Ют çĕршывсенче

„Ивнинг стандарт“ хаçат Хĕвеланăçĕнче наступлени пуçарса яма кирли çинчен

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Ивнинг стандарт» хаçат хăйĕн умстатьинче иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтса çырать.

Иккĕмĕш фронт уçас шухăша саламласа, хаçат çакăн çинчен аса илтерет: 1914 çулта, Марна çинче çапăçу пынă вăхăтра, вырăссем, Российăра войскăсене мобилизацилесе çитермен пулин те, Хĕвелтухăç Пруссие атакăланă. «Нимĕçсем иккĕмĕш фронт уçассинчен нимĕнрен ытларах хăранине кăтартса паракан тĕслĕхсем çителĕклех нумай,— тесе çырать хаçат.—Англин чи çывăх тĕллевĕ—хăйĕн планĕсене мĕнле те пулин хăвăртрах пурнăçа кĕртесси пулса тăрать. Иккĕмĕш фронт уçас шухăш халĕ ытти пур туйăмсенчен та малта тăмалла. Истори пирĕн ĕçе эпир хамăрăн союзниксене йывăр лару-тăрура пулăшас тени тăрăх мар, эпир вĕсене çав пулăшăва пама мĕнле самант суйласа илни тăрăх хакласа пăхĕ».

Англи летчикĕ Чешайр совет летчикĕсене саламлани

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин паллă летчикĕ Дж. Л. Чешайр, Берлина вĕçсе пырса тапăннă çĕрте нумай хутчен пулнăскер, Германипе Венгрие тапăннă совет летчикĕсем патне салам янă.

«Эсир Германи империйĕн территорийĕ çине татах шала пырса кĕни, сирĕн инçете вĕçекен бомбардировщиксем Будапешта çитни кашни британецăн чĕрине хавхалантарчĕ. Эсир хăвăра кăтартса панă тĕллевсене сиен кӳнине бомбардировка тăвакан авиацин кашни летчикĕ тивĕçлипе хаклать, çав çитĕнӳсем мĕнле вырăн йышăнса тăнине пĕтĕмĕшпех ăнланать. Эпир пĕрле пулнипе вăйлă. Эпир çапла шут тытăмăр: эсир — Хĕвелтухăçĕнчен, эпир — Хĕвеланăçĕнчен,—çапла вара Германи тĕлĕнчи тупе фашистла тискер хайĕсемшĕн хăрушлăхпа пулса ларĕ. Эпир сире ăнăçу сунатпăр.

Эскадрилья командирĕ, «За боевые заслуги родины» тата «Крест за летные боевые заслуги» орденсемпе наградăланăскер ДЖ. Л. ЧЕШАЙР».

АНГЛИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ СЫВЛĂШРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Германие тапăннă.

Çав çĕрлех противникăн йышлах мар самолечĕсем Хĕвелтухăç Англи çине вĕçсе пынă. Вĕсем пĕр хулан тулашне кĕске вăхăт хушши, анчах та хаяррăн атакăланă.

Англи бомбардировщикĕсем Рурпа Висбадена тапăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерствин коммюникинче çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Рурти объектсене атакăланă. Пушарсем нумай тухнă. Ĕнер тĕттĕм пулса çитсен, çăмăл бомбардировщиксем Висбаден районĕнчи промышленность объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Çав операцисенчен 39 бомбардировщик таврăнман.

ЛАПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Япони войскисем Гвадалканар утравĕ çине аннă, унта халĕ Япони войскисемпе Америка войскисем хушшинче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Японецсем çав утрав çинчи аэродрома тытса илесшĕн. Америка самолечĕсем Гвадалканарăн çурçĕртипе çуçĕр-хĕвеланăç енчи районĕсене, японецсем хăйсен войскисене антаракан районсене, йышлăн пыра-пыра тапăнаççĕ.

МАДАГАСКАРĂН ВЛАÇĔСЕМ ВĂРÇМА ЧАРĂНАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Мадагаскарăн генерал-губернаторĕ Анне Тананариеври (çав утравăн столицинчи) радиостанци урлă англичансене вăрçă ĕçĕсене чарма сĕннĕ. Анне хăйĕн представителĕсене Англи командованийĕ патне каласма янă.

Çывăхри хĕвелтухăçĕнчи вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Англин тинĕсри çăмăл вăйĕсем Тобрука тапăннă, унта вĕсем, авиаци активлăн пулăшса пынипе, пысăках мар десант антарнă. Десант антарнă чухне нимĕçсем Англи войскисене вăйлăн хирĕç тăнă, анчах та Англи войскисем хăйсем каялла кайиччен противника сиен кӳнĕ. Каялла кайнă чухне çухатусем пулнă. Çыранри оборонăна лайăх организациленине шута илсе çавăн пек çухатусем пулассине малтанах пĕлсе тăнă. Англин тинĕсри çăмăл вăйĕсем противникăн Эд-Даба районĕнчи çыхăнăвĕсене те ăнăçлăн атакăланă. Суднăсем гаване пĕр çухатусăрах тата нимĕнле сиен курмасăрах таврăннă.

ЧИЛИ СЕНАЧĔ ТĔНЕЛ ДЕРЖАВИСЕМПЕ ÇЫХĂНУ ТЫТМА ПĂРАХМАЛЛА ТУНĂ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Чили сеначĕ сентябрĕн 10-мĕшĕнче хăйĕн секретлă ларăвĕнче президент Пĕрлешӳллĕ Штатсене тата Америкăри ытти çĕршывсене кайса килнĕ хыççăн тĕнĕл держависемпе çыхăну тытма пăрахма йышăннă.

Индин законсем кăларакан центральнăй собранийĕн сессийĕнче

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Делирен çапла пĕлтерет: законсем кăларакан центральнăй собранин сессийĕнче сентябрĕн 15-мĕшĕнче ирхине Индин шалти ĕçсен министрĕ Реджинальд Максуэлл сăмах тухса каланă. Максуэлл хăйĕн сăмахĕнче Индири шалти лару-тăрăва çутатса панă. Унăн сăмахĕ тăрăх, пулса иртекен пăлханусем пирки çĕршывра йывăр лару-тăру, уйрăмах Бирмăпа чикĕре тăракан Бихар провинцийĕнче, çавăн пекех тата Пĕрлешӳллĕ провинцисен хĕвелтухăç пайĕнче çивĕч лару-тăру пулса тăнă. Çав хумханусем кӳнĕ сиенсем чылай пысăк.

Максуэлл аллинчи сведенисем тăрăх, çав хумханусем хăйсем тĕллĕн, стихийăллăн мар пулса иртнĕ, вĕсене çынсем пуçарса пынă. Хумханусем пуринчен ытларах стратеги тĕлĕшĕнчен паха вырăн йышăнса тăракан районсенче пулса иртнине уйрăмах палăртмалла, тапăнасса та вара пуринчен ытларах çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăракан коммуникацисем çине пыра-пыра тапăннă.

Тунă сиенсем мĕн тери пысăкки çинчен ыйтнине хирĕç ответлесе, Максуэлл çапла каланă: полиципе тата войскăсемпе халăх хушшинче пулса иртнĕ тытăçусенче 658 çынна вĕлернĕ, 993 çынна амантнă, анчах кусем вĕсем тулли цифрăсем мар. Войскăсенче 42 çын вилнĕ.

Законсем кăларакан центральнăй собранин членĕсенчен пĕри Джоши премьере тухса каласа çапла пĕлтернĕ: шалти ĕçсен министрĕн Максуэллăн сăмахĕ çĕршыври чăн-чăн лару-тăру çине «пăчах та хакламасăр пăхнине» кăтартса парать, тенĕ.

--⊙--

КĔСКЕН

▲ Норвегире 300 хаçата яхăн вăрттăн тухса тăраççĕ. Влаçсем çав хаçатсене тухма чарас тесе тăрăшни ăнăçуллă пулман.

▲ Хорватире çын пуçне кунне çакăр памалли нормăна 150 грамм таран чакарнă.

▲ Бразилире 25 фашистла агента тытса хупнă, вĕсем правительствăн радиостанцине тапăнна пулнă.

▲ Голландире пасарсенче урăх продуктсем çук пирки йытă какайĕпе кушак какайĕ сутаççĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СОВХОЗ „РОСГЛАВВИНО“ (гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21), имеет в продаже посадочный материал разных сортов—яблонь, смородину, малину. Отпуск производится всем гражданам.
9—1 Дирекция.

Пропавшую круглую печать

с надписью по кругу „НКНП СССР Нефтепроводскладстрой“ и в середине „Отдел кадров“—считать недействительной.

ПРОПАЛА СВИНЬЯ белая, живой вес 50—60 кг., правое ухо резаное, кличка «Сонька».
Знающих ее местонахождение просьба сообщить по адресу: г. Чебоксары, ул. М. Горького, д. 23, Леспромхоз.

Пропала лошадь.
Приметы: рыжая, рост 143 *см.* рождения 1927 года, кличка „Лиса“.
Знающих местопребывание ее просим сообщить по адресу: Красноармейский район, Карачево, колхоз „Красный Восток“.

Пропали две лошади:
1) Жеребец пегой масти, рождения 1941 года;
2) Кобыла рыжей масти, на лбу звезда, рождения 1939 года.
Знающих местонахождение их просим сообщить по адресу: п/о Б.-Чурашево, Советского района, дер. Демкино, колхоз „Броневик“.

Пропала кобыла рыжей масти, кличка „Акулька“ год рождения 1925, рост 136 см., на носу проточина.
Знающих ее местонахождение просьба сообщить колхозу „Родник“ Юнгинского с/с, Сундырского р-на, Чувашской АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1370 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 53 24 п. н.